# *Ăс-тăна аталантармалли вăйăсем*

1. Ыйтусемпе-ытарсем

Аслати хăçан авăтма тытăнать?(Чĕкеçсем вĕçсе килсен)
Вăрман тухтăрĕ мĕнле вĕçен кайăк?(Ула такка)
Йĕплĕ кĕрĕк хуçи мĕн ятлă?(Чĕрĕп)
Камăн ачи çунатсăрах вĕçет?(Çил ачин)
Катăк тута мĕнле чĕр чун?(Мулкач)
Тӳпе юрăçи мĕнле вĕçен кайăк?(Тăри)
Эрешмен миçе ураллă?(8)
Юрă ăсти мĕнле вĕçен кайăк-ши?(Шăпчăк)
Вĕçен кайăк патши кам?(Ăмăрт кайăк)
Йăмра кайăкĕ кам-ши?(Курак)
Масар кайăкĕ мĕн ятлă?(Çăхан)
Çул шутне палăртакан кайăк мĕн ятлă?(Куккук)
Чĕтре йывăç мĕн ятлă?(Ăвăс)
Шур кĕпеллĕ йывăç мĕн ятлă-ши?(Хурăн)
Мăйăр йывăçĕ мĕн ятлă?(Шĕшкĕ)
Йĕкел йывăçне мĕн теççĕ?(Юман)

***2. Ваттисен сăмахĕсене вĕçле***

Кам ĕçлемест,вăл…
Усал çынпа çула…
Упине тытмасăр…
Вĕрмен йытă …
Ялан ăспа çӳресен ялти ватă…

***3.Тупмалли юмахсен тупсăмне туп***

1. Суха тăвать, утă çимест(трактор)
2. Çулла тăхăнать,хĕлле пăрахать(вăрман)
3. Вĕрмен йытă пӳрт сыхлать(çăра)
4. Сивĕрен те,патакран та хăрамасть, ăшăран хăрать(çу)

***4. Грамматика вăййисем***

Сыпăксенчен çыхăнуллă предложенисем тăвасси(уйрăм хутсем çине сыпăксем çыратăп)
*ИН ПА КА МĂН СУЯ ЯЙ ÇЕ*

❖ ***Мĕнле сăмах ытлашши?***

Кала, сăмахла, вула, пупле,сӳпĕлтет

❖ ***Рифма тăрăх кирлĕ сăмах тупăр***

Кантăка, туссем, яр уçар
Янкăр кун тулта çиçет.
Çыру евĕр сарă **çулçă**
Урамра ирех… .

Татас çук эпир ăна-
Наркăмăшлă… .
Чăвашла ыйтсан кăна
Хурав парăп эп… .

Сывлăм типиччен
Вăранас пулать.
Ыйхă чăптинчен
Сар хĕвел… .

Тĕвик-тĕвик тăмана
Каç шăплăхне юратать,
Тĕвиклетсе пĕр кăна
Ăна хăех йăлт … .

- ***Метаграммăсем***

К-па пулсан тăхăнаççĕ.
Ç-па чухне манран пăрăнаççĕ(кĕрĕк-çĕрĕк)
Х-па пулсассăн тĕсĕм пур
П-па пулсассăн ăшăм пур(хура-пура)
Т-па чухне кĕвĕ калатăп.
Й-па чухне ÿссе ларатăп(тăмра-йăмра)
Т-па чухне вăхăт палли
П-па чухне- мухтав палли(талăк-палăк)
К-па йăлкăшса выртать
Т-па апата каять(кăвар-тăвар)
С-па чух- калаçмалли
Ç-па чух- çимелли(сăмах-çăмах)
У-па çутатать вăл тÿперен
Ы-па чух – выртса тĕлĕрен(уйăх- ыйăх)
П-па пулсан ăс-тăн хуранĕ
К-па пулсан кун çути хунарĕ(пуç-куç)

- ***Анаграммăсем***

Çамрăксем сиксе ташлаççĕ,
Ташă-кĕвĕ янăрать.
Ваттисем курма васкаççĕ-
Пĕтĕм халăх савăнать.
Каялла кăна вулатăн-
Санран пурте пăрăнать(туй-ют)
Юратса сана вулаççĕ
Ваттисем те вĕттисем.
Тепĕр май кăна лартаççĕ,
Шыв юхмалли пулăп эп(калав-валак)
Тус-сут, пас-сап, тавар-тавра, сарал- ларас

❖ ***Каламбурсем тупăр***
Анне вăрçать чупкăна
Саншăн пулсан… чуп кăна.
Выртать авă пĕр ĕне
Каснă –лартнă пĕрене
Тухрăм вăрăм çул çине,
Пухрăм хурăн çулçине
Юман çинче ларать курак
Темскер каласшăн вăл Кур ак
Апатне часрах антарăр
Ларăр эсир те, ан тăрăр

❖ ***Хуравĕсене клеткăра тупăр***
У Б Р А М Р О Н А
З 2К И Ш З Р Е Д Х
К Л А Л А А Л И У
Е Р А В Г Т А С С
1К У П Г С Т А Н И

1) ***С*** витаминпа пуян пахча çимĕç. Пан улми сорчĕ. Цингаран сиплекен пахча çимĕç. Апата виçесĕр çимелле мар, унăн мĕн пулмалла? Организма тасатакан çимĕç.

2) Куç витĕмлĕхне çивĕчлетекен çимĕç. Ир пулса çитĕнекен çимĕç.Яланах çимелли апат. Нумай çиме юраман, шурă,тутлă мар япала. Телевизорпа час-часах çынсем туянччăр тесе кăтартакан япала.

***Хускану вăййисем***

Хускану вăййисене ларса та, тăрса та ирттеретпĕр. Весем ывăннине сирсе яма пулăшаççĕ, малалла ĕçлес кăмăла хăпартаççĕ. Мĕн-мĕн кĕрет-ха хускану вăййисен шутне? ***1. Калаçупа тата музыкăпа усă курса тĕрлĕ хусканусем тăвасси. 2. Куç,чĕлхе тата пўрнесен гимнастики. 3. Ўт-пўри пĕр-пĕр вырăна массаж туни.***

***Хушма материал***
1. Ўсрĕм-ўсрĕм çўллĕ-çўллĕ
Татах ўсрĕм туран çўллĕ
Унта пăхрăм, кунта пăхрăм
Хаш сывларăм, лартăм
Тепре тăтăм, лартăм

***
Шутлама пĕлетпĕр пурте
Пĕррĕ, иккĕ, виççĕ, тăваттă
Канма та эпир ăста

Алсене хыҫа тытатпăр,
Ҫӳлелле пуҫа ҫĕклетпĕр
Пурте ҫăмăллăн сывлатпăр
Урапа тăпăртататпăр,
Алсене ҫупатпăр,
Пуҫа унталла-кунталла пăркалатпăр
Алсене ҫӳлелле ҫĕклетпĕр,
Аялалла антаратпăр,
Шăппăн вырнаҫса ларатпăр

***

Алсене, туссем, ҫĕклер—и
Ҫӳлелле пуҫ тăррине?
Шарт та шарт ҫупса илер-и-
Кам савмасть ал ҫупнине?

***

2.

***Чĕлхе гимнастики тумалли йĕркесем***

Ăп-ăп-ăп Ча-ча-ча
Эп ларатăп шăп Эп аван ача

*** ***

Кил, кил, кил Кай, кай, кай
Ман пата эс кил Ман патран эс кай
*** ***
Кул, кул, кул Пул, пул, пул
Савăнса эс кул Пысăк , ăслă пул
*** ***

Ăн-ăн-ăн, Ăн—ăн-ăн,
Эп калатăп чăн Пит хитре ман сăн

*** ***

Ан-ан-ан , Ан-ан-ан,
Вăт епле аван, Вĕренме тăван.

***Куҫ гимнастики***

- Ҫӳлелле-аялалла пăхса илмелле (6-8 хут)
- Ҫӳлелле-сылтăмалла, унтан ҫӳлелле-сулахаялла пăхмалла (6-8хут)

***

Куҫа хупса 20 таран шутличчен лармалла, унтан куҫа уҫса 20 таран шутличчен инҫетелле пăхмалла.

***

***Пуҫа уҫӑлтарас, кантарас тӗллевпе ирттермелли гимнастика***
Сылтӑм сӑмса шӑтӑкне пӳрнепе хупласа сулахаййипе майӗпен сывлӑш ҫӑтса илмелле. Унтан самантлӑха сӑмса шӑтӑкӗсене иккӗшне те хупламалла. Ун хыҫҫӑн сылтӑммине уҫмалла та хулен сывласа кӑлармалла. Кайран сывлӑша сылтӑммипе сывласа илмелле, сулахаййипе сывласа кӑлармалла.

***Массаж***
1. Хӑлхан аялти вӗҫне массаж туни пуҫа лайӑхрах ӗҫлеме пулӑшать
2. Хӑлхан ҫунаттине массаж туни кӑмӑла ҫӗклет

3. Хӑлхан ҫивӗчлӗхне ӳстерес тесен хӑлхана варринчен тытмалла та 20 хутчен майӗпен туртмалла (ку мелсемпе вӗрентекенӗн вырӑнлӑ усӑ курма пӗлмелле. Тӗслӗхрен, ачасен кӑмӑлӗ литература хайлавне вуланӑ май хуҫӑлма пултарать. Вӗрентекен вара хӑлха ҫунаттине массаж туни кӑмӑла ҫӗклеме пулӑшнине аса илтеретет те пӗр 20 таран шутличчен массаж тутарать)

***Психологиллӗ хусканусем***
Ӑсра сӑнарлӑ шухӑшлани ҫыннӑн мышцисене ирӗклӗнех халсӑрлатать. Мышцӑсем ирӗклӗн халсӑрланнине пула ӑшра ҫӑмӑл та лайӑх пулса каять. Ҫын вӑхӑтлӑха канса илет те малалла ӗҫлемелӗх вӑй-хал илет. Апла пулсан вӑхӑтлӑха халсӑрланни канма та, лӑпланма та, пуҫтарӑнма та пулӑшать. Ҫак хусканусемпе эпӗ ытларах литература урокӗсенче усӑ куратӑп.
***Хушма материал***
Пӗр-пӗрне алран тытӑр, пӗр-пӗрне куҫран пӑхӑр та йӑл кулӑр . Туятӑр-и мӗнле лайӑх пулса кайрӗ?

***
-Ачасем, лайӑх вырнаҫса ларӑр, куҫӑра хупӑр. Эпир тинӗс хӗрринче.Хумсем пӗр тикӗссӗн шавлани илтӗнет. Эсир тинӗсӗн уҫӑ сывлӑшӗпе сывлатӑр. Сывлӑр, тарӑннӑн сывлӑр. Эсир канатӑр

***
Атьӑр-ха, шухӑшра чӗрери ырӑ кӑмӑла, ачашлӑха ывӑҫ тупанӗ ҫине хурар. Хутӑр-и?

Халӗ шӑппӑн ура ҫине тӑрӑр та алӑ тупанӗнчи ырӑ кӑмӑлпа ачашлӑха сывлӑша кӑларӑр, сапаланччӑр вӗсем эпир пурӑнакан тавралӑх ҫийӗн. Пӑхӑр-ха чӳречерен. Куратӑр-и, пӗтӗм тавралӑх пирӗн ырӑ кӑмӑлпа, ачашлӑх пайӑркисемпе ҫуталса кайрӗ.

***
Сирӗн умра тӗсе пӗлтерекен сӑмахсем: ***хӗрлӗ,сарӑ,апельсин тӗслӗ, симӗс, кӑвак, хӗрлӗ кӑвак, хура, шурӑ.***

Куҫа хупӑр та шухӑшлӑр, хӑвӑр кӑмӑлӑра мӗнле тӗспе палӑртнӑ пулӑттӑр
Ачасем ура ҫине тӑраҫҫӗ, (малтан пӗр тӗсе суйласа илнисем, унтан тепӗр тӗсе

суйласа илнисем…. ) Юлашкинчен учитель кăмăла палăртакан кашни тĕс мĕне пĕлтернине шута илсе пĕтĕмлетӳ тăвать.

Хĕрлĕ – пысăк савăнăçлă
Сарă - ырă
Апельсин тĕслĕ – хаваслă
Симĕс – лăпкă
Кăвак – салхуллă
Хĕрлĕ кăвак – канăçсăр
Хура – пусăрăнчăк , хуйхăллă
Шурă – шиклĕ

***
Хамăрта пур киревсĕр характер уйрăмлăхĕсене ал тупанĕ çине хурар та ура çине тăрса аякка-аякка ывăтар

***
«Усăллă – сиенлĕ» вăйă (ӳкерчĕксем кăтартатăп, кăтартнă ĕç сиенлĕ пулсан ачасем урисемпе тăпăртатаççĕ, усăллă пулсан алă çупаççĕ)

***
«Чĕрĕ йывăççем»
Атьăр-ха саманлăха пурте йывăç пулса тăрар. Куçа хупăр та шухăшласа пăхăр, мĕнле йывăç сирĕн пулас килет. Халĕ пурте ура çине тăтăмăр. Эпир - йывăç, алă- йывăç туратти, пӳрнесем – çулçă. Çил вĕре пуçларĕ, туратсем силленме пуçларĕç. Çил вăйланнăçем вăйланчĕ, çулçăсем чĕтреме тытăнчĕç. Çил лăпланчĕ, йывăççем пĕр-пĕрин çине пăхса йăл кулчĕç те шăпланса ларчĕç

***
***Пĕтĕмлетӳ***

Кирек мĕнле вăйă элеменчĕпе те творчествăллă усă курмалла. Учитель вĕсене хăйне кирлĕ пек çĕнетсе улăштарма пултарать.

Ачасен тимлĕхĕ чакнине туйсанах урока вăйă саманчĕсем кĕртмеллине яланах асра тытмалла. Паллă педагог В.Сухомлинский çапла каланă: « Тулли ăс-тăн аталанăвĕ вăйăсăр пулмасть, пулма та пултараймасть».

Вăхăтра вăйă саманчĕ ирттерни вĕрентекенĕн авторитетне те, ачасен вĕренӳри тимлĕхне те, хастарлăхне те ӳстерме самаях пулăшать. Çав вăхăтрах вĕренекен хăйне йĕркеллĕ тыткалама, сывлăха упрама вĕренет.

***Усă курнă литература***

- Л.П.Сергеев «Грамматика вăййисем»-Шупашкар.Чăваш кĕнеке из-ви,2008
- З.Е.Ананьева «Чăваш чĕлхине тăван мар чĕлхе пек вĕрентмелли хăнăхтарусем» -Шупашкар, 2007
- В.И.Ковалько «Здоровьесберегающие технологии» -Москва «Вако»2004
- Тĕрлĕ хаçат - журналсенчен пуçтарнă материал